Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

39 (7679) № * Шăмат кун, 2009 çулхи майăн (çу) 16-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Патриотла воспитани

## Çĕршыв сыхлăхĕ шанчăклă алăра



**Майăн 13-14-мĕшĕсенче районти çамрăк армеецсен XXXXI «Зарница» тата «Орленок» финал ăмăртăвĕсем иртрĕç. Пурĕ 36 команда хутшăнчĕ унта, вĕсенчен виççĕшĕ – çарпа патриотика клубĕсем. Шăпах патриотла воспитани парас ĕçре çак вăйăсем питĕ пĕлтерĕшлĕ. Унти ăмăртусене хатĕрленнĕ май яшсемпе хĕрсем Тăван çĕршывăн историпе культурине тепĕр хут тишкереççĕ, çакăнпа пĕрлех çирĕп ăс-хакăлпа тӳсĕмлĕх кăтартаççĕ. Орининти вăтам шкулти «Зарница», Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулти «Орленок» командисем тата Муркашри вăтам шкулти «Родина» çарпа патриотика клубĕ республика вăййисенче район чысне хӳтĕлеме тивĕç пулчĕç.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Çур аки – 2009

## Ĕçсем çĕр улми пуссине куçаççĕ



Районти нумай ял хуçалăх производство кооперативĕсенче çурхи культурăсене акас ĕçсем вĕçленчĕç ĕнтĕ. Выльăх апачĕллĕх пĕр çул ӳсекен курăксемпе выльăх кăшманĕ акассипе те чылай çĕрте ĕçсем хыçа юлчĕç. Çапла вара çĕр ĕçченĕ пĕтĕм тăрăшулăха паян «иккĕмĕш çăкăр» пуссине уйăрать.

Çĕр улми лартассине районта ыттисенчен маларах Ильич ячĕпе хисепленекен, «Оринино», «ДаАн» хуçалăхсемпе Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕ пуçăнчĕç. Иртнĕ çумăрсемччен вĕсем пĕтĕмĕшле 100 гектара яхăн çĕр улми лартрĕç.

«Иккĕмĕш çăкăрпа» ĕçлес текенсем кăçал çак культурăн лаптăкĕсене те ӳстерчĕç. Анчах... Район администрацийĕн ял хуçалăх пайне пĕлтернĕ оперативлă кăтартусемпе Муркаш енри 9 пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа «ДаАн» тата «Картофель» агросоюз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, 5 хресчен (фермер) хуçалăхĕ кăна лартма кăмăл тунă ăна. Вĕсем хушшинче çĕр улми лартас лаптăка палăрмаллах ӳстернисем те пур.

Çĕр улми уйрăмах нумай лартакансем: «Герой» (100 гектар), «Свобода» (180 гектар), «Ударник» (330 гектар), «ДаАн» (100 гектар). Акă камсенчен тĕслĕх илмелле малашлăха пăхакансен!

«Иккĕмĕш çăкăр» лартассипе ĕçсем малалла пыраççĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ

## Списокра – вată çынсен «парăмçисем»

***Хальхи вăхăтра районти предприятисемпе организацисем обязательнăй пенси страхованийĕн взносĕсене тӳлесе тăрасси тивĕçлĕ шайра мар. Ку вара пенсие тухма хатĕрленекенсемшĕн сахал мар ыйту çуратать. Çакă пулас пенси виçипе тӳрремĕнех çыхăннă. Çавна май ку ыйтăва РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхне Елена Михайловна АЛЕКСАНДРОВАНА уçăмлатма ыйтрăмăр.***

– Раççей Пенси фончĕн районти управленийĕ хăйĕн сайтĕнче 2008 çулшăн обязательнăй пенси страхованийĕн взносĕсене çурри чухлĕ те тӳлемен организацисен ячĕсене вырнаçтарчĕ. Парăмçăсем шутĕнче – ĕç паракансенчен кашни 16-мĕшĕ (Чăваш Республикипе ку хисеп 11-пе танлашать). Çак списока лекнĕ 19 организацире 928 çын ĕçлет (республикипе 1475 организацире – 34,5 пин çын). Иртнĕ çул вара парăмçăсенчен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ Пенси фондне пачах та взноссем куçарса паман.

Районти уйрăмах пысăк парăмçăсем шутĕнче «Моргаушрайбыт» чикĕллĕ яваплăхлă общество (кунта 78 çын ĕçлет), «Лидер» агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă общество (90 çын), «Рассвет» агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă общество (92 çын), «Хлебороб» чикĕллĕ яваплăхлă общество (60 çын), «Кавказ» чикĕллĕ яваплăхлă общество (18 çын), «Милтрейд» чикĕллĕ яваплăхлă общество (15 çын).

Пур парăмçăсем патне те парăмсене тӳлесе татассипе требованисем ярса парăпăр. Хыççăн вара, парăм 50 пин тенкĕрен иртмест пулсан, нимĕнле тавлашусăрах ку суммăна суд приставĕсен служби урлă шыраса илме тивĕ. Парăм 50 пин тенкĕрен иртет пулсан, суд искĕсем тăратма тивет.

Страховани взносĕсем куçарса тăни ĕçлекен кашни çыннăн пулас пенсийĕн виçипе, унăн страховани стажĕпе тӳрремĕнех çыхăннă, кунпа пĕрлех ку вăл ĕçлекен пенсионерсене пенси виçине çĕнĕрен шутласа пама та кирлĕ. Пухăннă взноссем хальхи вăхăтра тивĕçлĕ канурисене – пирĕн атте-аннесене, асаннесемпе асаттесене пенси тӳлеме каяççĕ. Çакă та организацисен ертӳçисене страховани взносĕсене Пенси фондне вăхăтра тата туллин тӳлесе тăма хистемелле.

**– Раççей Правительствин Председателĕ Владимир Путин 2009 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕсен виçине 13 процент ӳстересси пирки пĕлтерчĕ. Кун пирки телевиденипе те хыпарланăччĕ. Тĕрĕссипе вара вĕсем 8,5 процент кăна ӳсрĕç.**

– Пенси фончĕн районти управленийĕ çавна пĕлтерет. Раççей Федерацийĕн уйрăм законодательство акчĕсене улшăнусем кĕртнĕ. Акă федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕсен виçине 13 процент ӳстернĕ. Апрель уйăхĕшĕн ку суммăна май уйăхĕнче хушса тӳлĕç.

2009 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса соцпакет хакĕ 641 тенкĕпе танлашрĕ. Вăл шутран 570 тенкĕ эмелсемшĕн тата санаторисемпе курортсенче сипленнĕшĕн тӳлеме, 71 тенкĕ хула çывăхĕнчи чукун çул транспорчĕпе çӳреме.

Çĕнĕ радио

## Эфирта – чăваш сăмахĕ

**Апрелĕн 25-мĕшĕнче, Чăваш чĕлхин кунĕнче, Чăваш наци радио ĕçлеме пуçларĕ. Эфирта ăна FM 105,0 МГц хум çинче итлеме пулать. Чăваш сассине Муркаш енне Çĕрпӳри передатчик илсе килет.**

**Çавăн пекех çĕнĕ радио передачисене Интернет сечĕ урлă та итлеме пулать. Çапла тума ЧР влаç органĕсен официаллă порталне (www.cap.ru) çеç кĕмелле. Кунта кулленхи передачăсен программи те пичетленет.**

**Наци радио передачисем ирхи 6 сехетрен пуçласа çĕрлехи 22 сехетчен пыраççĕ.**




## «Сывлăх» ял çыннисене сывлăха çирĕплетме чĕнет

Ялта пурăнаканăн нихăçан та вăхăт çук, çуркунне – пушшех те. Анчах манар мар, сывлăхран хакли нимĕн те çук. Сывлăх çук çынна ĕç те, укçа-тенкĕ те савăнăç кӳмеççĕ. Çавăнпа сывлăха çирĕплетсе пымалли пирки нихăçан та манма юрамасть.

Ертӳçĕсене вара хăйсен ĕçченĕсем пирки шухăшлама сĕнес килет. Мĕншĕн уйрăмах хастаррисене районти «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн абонеменчĕсене парнелес мар. Коллективпа та йышăнаççĕ кунта.

Çамрăксене вара ӳкĕтлеме те кирлĕ мар-тăр. Сывлăха ачаран çирĕплетни паянхи пурнăçра уйрăмах кирлĕ. Кун пирки ашшĕ-амăшĕн шухăшламаллах.

«Сывлăх» паракан услугăсен хакĕсемпе 6-мĕш стр. паллашăр.

«Халăх тата влаç» – тĕллевсем те пĕр пек, ĕçсем те пĕрлех

## Пĕр çыру та тимлĕхсĕр юлмасть

***Тĕрлĕрен ыйтусемпе килеççĕ граждансем район администрацине. Вĕсен кашни ыйтăвĕ вара тимлĕх ыйтать. Мĕн ытларах хумхантарать районта пурăнакансене? Мĕнле татса параççĕ тата район администацийĕнче вăл е ку çыру шăпине? Çакăн çинчен каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн ĕçĕсене йĕркелесе пыракан А.В. КРАСНОВРАН. Александр Валерианович каланă тăрăх, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, граждансенчен юлашки çулсенче çырусем ытларах килеççĕ:***

– Кăçалхи 1 кварталта пĕтĕмпе граждансенчен 25 çыру килчĕ. 2008 çулхи çак тапхăрта вара ку кăтарту 20 çырупа танлашнăччĕ. Тĕпрен илсен, пĕлтĕр çулталăк тăршшĕпех çыру ун умĕнхи çулхинчен ытларах килсе тăчĕ: 1 кварталта 2, 2 кварталта 5, 3 кварталта 7, 4 кварталта 11 çыру ытларах килчĕ.

**– Малалла çыру шăпи мĕнле йĕрпе каять?**

– Çырура хускатнă ыйтусене шута илсе, вĕсене пăхса тухма малалла район администрацийĕн структура уйрăмĕсене паратпăр. Çапла майпа кашни çырура хускатнă ыйту епле пурнăçланнине контрольтен кăлармастпăр.

**– Кăçал мĕнле ыйтусем ытларах канăç памаççĕ районта пурăнакансене?**

– Пана ыйтусенчен ытларахăшĕ (28 процент е 7 çыру) строительство комплексĕпе çыхăннă. Граждансем ялсенчи тĕп урамсенче асфальт сарас ыйтупа коллективпа пĕрле пуçтарăнса çырнă, çавăн пекех ялсенчи çулсене, шыв пăрăхĕсене юсассипе çыхăннă ыйтусене хускатаççĕ.

Сăмах май çакна палăртса хăварас килет. Иртнĕ çул район территорийĕнче 23,8 километр чухлĕ çул тунă, çав шутран – 19 ял патне. Районти 177 ялтан 10 çынран та сахал пурăнакан 5 яла çити çеç асфальт çул туман. Кусемсĕр пуçне пĕлтĕр Республика кунне хатĕрленсе Муркашра кăна 2,6 километр чухлĕ çул тунă.

2009 çулта район территорийĕнче çӳп-çап тăкмалли полигон тăвасси те çине тăрса ĕçлемелли ыйту пулса тăрать.

Килнĕ çырусенчен тепĕр 16 проценчĕ (4 çыру) транспорт ыйтăвĕсемпе çыхăннă. Граждансем вĕсенче çĕнĕ автобус маршрутĕсем уçас е маршрутсене улăштарас, транспортпа çӳренĕ чух çăмăллăхсемпе усă курас ыйтусене хускатаççĕ.

Район адмимнистрацине килнĕ çырусенчен тепĕр 12 проценчĕ (3 çыру) финанс ыйтăвĕсемпе çыхăннă.

Çавăн пекех районта пурăнакансем уйрăм çынсен хăтланăвĕсемпе килĕшменни çинчен çырса пĕлтереççĕ, Территорисене хăт кĕртес, вăл е ку уяв тĕлне парнесемпе тивĕçтерес ыйтусемлĕ çырусем те пур.

**– Александр Валерианович, тепĕр чухне хăшĕ-пĕрисем вăл е ку çитменлĕх çинчен мĕн чуль «çӳлерех» çыратăн, çавăн чухлĕ хăвăртрах татса параççĕ, тесе шутлаççĕ. Район администрацине çырусем граждансенчен тӳрех килеççĕ-и е «çӳлерех» тăракан организацисем урлă çаврăнса çитнисем те пур?**

– Ун пеккисем те, кун пеккисем те пур. Кăçалхи 1 кварталта килнĕ 10 çырăва (40 процент) пире çӳлерехри тăракан организацисенчен ярса пачĕç. Вĕсенчен 9-шне (36 процент) ушкăнпа пуçтарăнса çырнă.

Кунта манăн çакна палăртса хăварас килет. «Çӳлерех» çырнă çырури ыйтусене те пирĕн хамăрăнах район шайĕнче татса парас пулать. Аякран килсе пĕр туххăмрах никам та пирĕн ыйтусене татса параймасть. Хамăр район аталанăвĕ пирĕнтен хамăртанах килет. Пĕрле шухăшласа, майсем тупса, пĕрле татса памалла пирĕн кашни ыйтăва. Çапла тума тăрăшатпăр та.

**– Килнĕ çырусен шăпи мĕнпе вĕçленчĕ?**

– Кашни çырăва тĕплĕн тишкернĕ. Вĕсенчен 32 процентĕнче авторсем ыйтнине тивĕçтернĕ. Тепĕр 52 процентне çыракансене тивĕçлĕ хуравсем панă.

Çакна та каласа хăвармалла. Район администрацийĕн пуçлăхĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталта 36 граждана тĕрлĕ ыйтусемпе йышăннă.

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**

Юбилей

## Саламлатпăр



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, хунямана, ăшă кăмăллă кукамая, асаннене, хисеплĕ тăвана – Вомпăкасси ялĕнче пурăнакан **Вера Гурьевна ИВАНОВАНА** 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕрери чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн телей, пуянлăх, савăнăç.

**Салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕ, мăнукĕсем тата йышлă тăванĕсем.**

## Иккĕмĕш çур çул валли çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унччен хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Райхаçат редакцийĕ.**